**Чун канăçĕ**

Ăçта эсĕ чун канăçĕ, ăçта?
Шыратăп, тупаймастăп-çке сана.
Ĕçре те тупăнмарăн, канура та,
    пулмарăн маншăн эс юратура...

Ĕçленĕçемĕн –
    ĕç ăнса пырсассăн
Эп ывăна пĕлмесĕр тăрмашап,
Кану та маншăн – купăса тытсассăн
Эп юрласа чуна уçăлтарап.

Çĕр аннепе мĕн пулĕ-ши,
    йăлтах ванса саланĕ-ши?
Çара озон шăтăкĕнчен
    Хĕвел çунтарă-ши Çĕре,
Ăслăхран тухнă ăссăрлăх –
    нейтрон тĕп тăвĕ-ши пире?

Çĕр чĕтренни, вулкан, тайфун –
    Этемлĕх эрлĕк курасси
Миçе çул юлнă, миçе кун?
Эп ĕненетĕп – çутă Çĕр
    Тĕнчешĕн пулмĕ хăрхăм-хĕр.

Канăçсăр шухăш чĕремре,
    нивушлĕ канăç вилĕмре?
Вилĕм çынран лĕх-лĕх кулать:
«Вилсен – çĕресси çеç юлать? –
Вилсессĕн те – тăпра пулса
    выртаймăн канлĕн карăнса».

Ăçта эсĕ чун канăçĕ, ăçта?
Никам та калаймасть ăна,
            таçта...

*Асамат, С. Чун канăçĕ / С. Асамат // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 541.*